26-мӗш ҫул тухать, Хакӗ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
2
ЮНКУН
23(6518) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пырса, Луга шывӗ урлӑ каҫнӑ та паян, февралӗн 1-мӗшӗнче, тӑшмана ҫавӑрса илмелли ӑста маневр туса, КИНГИСЕПП хулипе чугун ҫул станцине — нимӗҫсен Нарва хули енчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — тытса илнӗ.

КИНГИСЕПП хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантӑн, АЛФЕРОВ генерал-майорӑн, ФАДЕЕВ генерал-майорӑн, АЛИЕВ генерал-майорӑн, ПОТАПОВ полковникӑн, НИКОНОРОВ полковникӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-майорӗн ЧАРНЯВСКИН артиллерисчӗсем, КОВАЛЕВСКИЙ подполковникӑн танкисчӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн САМОХИНӐН летчикӗсем тата инженернӑй ҫарсен генерал-майорӗн МАРЬИНӐН саперӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «КИНГИСЕППСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 1-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗрҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вунӗкӗ хут пӗр харӑс персе, КИНГИСЕПП хулине тытса илнӗ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, КИНГИСЕПП хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи февралӗн 1-мӗшӗ.

Чӑваш АССР-ӗнчи районсен, МТС-сен тата колхозсен 1943-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ постановлени

Чӑваш АСС Республикинчи районсен, машинно-тракторнӑй станцисен тата колхозсен 1943 ялхуҫалӑх ҫулӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

1. 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес тӗлӗшпе районсем хушшинче пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура Вӑрнар районӗ ҫӗнтернӗ тесе шутлас, вӑл ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ытти районсенчен пуринчен те ытларах ӳстернӗ, ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсене кӗске срокра туса пӗтернӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана чылай ирттерсе пурнӑҫланӑ тата государствӑна обязательнӑй йӗркепе ялхуҫалӑх продукчӗсем тӑратмалли плана пуринчен малтан пурнӑҫа кӗртнӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне Вӑрнар районӗнчех хӑварас. Вӑрнар райисполкомӗн председательне Осипов юлташа, ВКП(б) райкомӗн секретарьне Коротков юлташа тата райҫӗрӗҫ пайӗн заведующине Максимов юлташа кашнинех уйӑхри ӗҫ укҫипе премилес. Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансене, премилеме Вӑрнар райисполкомне 8.000 тенкӗ укҫа парас.

1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес тӗлӗшпе Етӗрне, Элӗк, Калинино, Шупашкар, Сӗнтӗр, Вӑрмар, Советски, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗрпӳ тата Шӑхасан районӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртас.

2. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхпе лашасем ӗрчетес тӗлӗшпе районсем хушшинче пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура Элӗк районӗ ҫӗнтернӗ тесе шутлас, вӑл 1943 ҫулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне—лашасем ӗрчетес енӗпе 101 процент, ӗне-выльӑхсем ӗрчетес енӗпе 109,5 процент, сысмасем ӗрчетес енӗпе 116,8 процент, сурӑхсем ӗрчетес енӗпе 115,1 процент пурнӑҫланӑ тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне чылай ӳстернӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне Элӗк районӗнчех хӑварас. Элӗк райисполкомӗн председательне Филимонов юлташа, ВКП(б) райкомӗн секретарьне Федотов юлташа, райҫӗрӗҫ пайӗн заведующине Волков юлташа тата старши зоотехнике Данилов юлташа кашнинех уйӑхри ӗҫ укҫипе премилес. Районри выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре малта пыракансемпе специалистсене премилеме Элӗк райисполкомне 6.000 тенкӗ укҫа парас.

1943 ҫулта обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе Вӑрнар, Сӗнтӗрвӑрри, Шӑхасан, Ишлей, Ҫӗрпӳ, Вӑрмар тата Сӗнтӗр районӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртас.

3. Тракторпа тумалли ӗҫсен планне пурнӑҫа кӗртессишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура Шӑхасан МТС-ӗ ҫӗнтернӗ тесе шутлас, вӑл 1943 ҫулта тракторпа тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне 105 процент пурнӑҫланӑ, МТС-ри 15 лаша вӑйӗ кашни тракторпа вӑтам шутпа 423-шер гектар ҫинчи ӗҫе тунӑ тата 11,9 тонна горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне Шӑхасан машинно-тракторнӑй станцине парас. МТС директорне Константинов юлташа, старши механике Северов юлташа тата мастерской заведующине Денисов юлташа кашнинех уйӑхри ӗҫ укҫипе премилес.

МТС-ӑн ӗҫре палӑрнӑ работникӗсене премилеме Шӑхасан МТС-ӗн директорӗ аллине 4000 тенкӗ укҫа парас.

1943 ҫулта тракторпа тумалли ӗҫсен планне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Йӗпреҫ, Вӑрнар, Елчӗк тата Комсомольски МТС-сем лайӑх ӗҫленине палӑртас.

4. 1943 ҫулта ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес тата обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе колхозсем хушшинче пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (колхоз председателӗ Зайцев юлташ) мала тухнӑ тесе шутлас. Вӑл ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пурне те кӗске срокра туса ирттернӗ, кашни гектартан пӗрчӗллӗ культурӑсем вӑтам шутпа 16-шар центнер туса илнӗ, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана чылай ирттерсе пурнӑҫланӑ, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли мӗнпур обязательствӑсене срокчен пурнӑҫа кӗртнӗ тата государствӑна тырӑ нумай сутнӑ.

Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоза Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне парас.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ҫак колхозсем лайӑх ӗҫленине палӑртас: Вӑрнар районӗнчи Сталин, Киров ячӗсемпе тӑракан, «1-ое Мая» колхозсем; Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Красная Армия» колхоз; Шупашкар районӗнчи «Осоавиахим», «Память Ленина», Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем; Етӗрне районӗнчи «Парижская Коммуна», «Дружба», Мичурин ячӗпе тӑракан колхозсем; Сӗнтӗр районӗнчи «Красное Сормово», «КИМ» колхозсем; Элӗк районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан, «Добровслец» колхозсем; Елчӗк районӗнчи «Марс» колхоз; Советски районри «Сеятель», «Первое мая» колхозсем; Шӑхасан районӗнчи «Активист», «Парижская Коммуна», «Победа» колхозсем; Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем; Тӑвай районӗнчи «Красная Чувашия», «8-ое Марта» колхозсем; Йӗпреҫ районӗнчи «Тымар», «Большевик» колхозсем; Красноармейски районри «Сила», «Прогресс» колхозсем; Вӑрмар районӗнчи «Красный Мурат», «Большевик», «Красные Шигали» колхозсем; Ҫӗрпӳ районӗнчи «Емӗт», «Чӑваш ЦИК» тата «Красный Герой» колхозсем; Калинино районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан, «Броневик» колхозсем; Шӑмӑршӑ районӗнчи «Заря» колхоз; Пӑрачкав районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан, «Красный пахарь» колхозсем; Первомайски районри «Большевик» колхоз; Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Коминтерн», «Совет» колхозсем; Ишлей районӗнчи «Большевик», «Парижская Коммуна», «Авангард» колхозсем; Куславкка районӗнчи «Динамо», «Правда» колхозсем; Кувакино районӗнчи «Красный партизан» колхоз; Октябрьски районри «Коммунизм», «Венера» колхозсем; Комсомольски районри «Трактор», «Красный Октябрь» колхозсем; Канаш районӗнчи Доронин ячӗпе тӑракан, «Красное пламя», Киров ячӗпе тӑракан колхозсем; Чкаловски районри «Красный Октябрь», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем; Ҫӗмӗрле районӗнчи «Комбайн», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем.

Чӑваш АССР Совнарком Председателӗн Заместителӗ Ф. СЕМЕНОВ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ Н. БЕЛКОВ.

Сӑрьелсем фронта пулӑшаҫҫӗ

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Елчӗк районӗнчи «Марс» колхоз членӗсем фронта пулӑшас тӗлӗшпе нумай ӗҫсем турӗҫ. Тӑван ҫӗршывӑн оборонӑ фондне 13 сурӑх, 23 хур, 43 чӑх, 366 пӑт тырӑ, 1560 тенкӗ укҫа панӑ. Танксен колоннине тума 175 пин тенкӗ, самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 47.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Вӗсемсӗр пуҫне колхозниксемпе колхозницӑсем фронтовиксем патне пӗр тӑлӑп, 12 кӗрӗк пиншак, 12 фуфайка, 19 мӑшӑр ҫӑматӑ, 70 ҫӗлӗк, 172 мӑшӑр алсасемпе чӑлхасем, 20 мӑшӑр тир алса, 10 шалавар, тир, ҫӑм тата ытти нумай япаласем янӑ.

Хӗрлӗ Ҫар воинӗсене нумай пӗрлӗ кучченеҫсем ярса панӑ. Вӑл шутра 633 килограмм аш-какай, 52 килограмм ҫу, 73 килограмм пыл, 15 центнер тулӑ ҫӑнӑхӗ, 30 литр эрех, 10.715 тенкӗ укҫан ярса панӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсене фронта пулӑшас ӗҫре колхоз председателӗ Абдул Гаязов хӑйӗн примӗрӗпе хавхалантарса пырать. Вӑл фронтшӑн, Хӗрлӗ Ҫаршӑн пулсан нимӗн те шеллемест. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Абдул Гаязов оборона фондне пӗр сурӑх, 36 пӑт тырӑ панӑ. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне 2 мӑшӑр ҫӑматӑ, пӗр ҫӗлӗк тата кӗрӗк пиншак валли 7 тир, носкисем ҫыхма 5,5 килограмм ҫӑм панӑ. Гаязов юлташ фронта пулӑшас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах 1942 ҫулта мухтава тивӗҫлӗ ӗҫ турӗ. Вӑл танксен колоннине тума 105.000 тенкӗ укҫа пачӗ. Иртнӗ 1943 ҫулта вӑл государствӑна 166 пӑт тырӑ сутрӗ. Государствӑн иккӗмӗш Военнӑй Заемне 15.000 тенкӗлӗх, укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене 10.000 тенкӗлӗх илчӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем фронта пулӑшассине хӑйсен кулленхи тивӗҫӗ тесе шутлаҫҫӗ. Вӗсем ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартма нимӗн те шеллемеҫҫӗ.

И. ПЕТРОВ.

ССР Союзӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн Х-мӗш Сессийӗ

Национальноҫсен Совечӗн тата Союз Совечӗн 1944 ҫулхи январӗн 31-мӗшӗнчи ларӑвӗсем ҫинчен

Информациллӗ пӗлтерӳ

Енер, январӗн 31-мӗшӗнче, СССР Верховный Совечӗн ларӑвӗсем пулакан залра, Кремльре, Национальноҫсен Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Ларӑва Национальноҫсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ депутат Ч. А. Асланова председатель пулса ертсе пынӑ.

Кун йӗркинче—ССР Союзӗн 1944-мӗш ҫулхи государство бюджечӗ тата 1940, 1941, 1942-мӗш ҫулсенчи государство бюджечӗсене мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси.

Прение ҫаксем тухса калаҫӑ: депутат М. И. Джаши (Грузин ССР-ӗ), депутат М. Ибрагимов (Азербайджан ССР-ӗ), депутат И. С. Былинский (Белорусси ССР-ӗ), СССР-ӑн Пулӑ промышленность Халӑх Комиссарӗ А. А. Ишков юлташ, депутат Т. Н. Кары-Ниязов (Узбек ССР-ӗ), депутат Н. А. Масленникова (Курск облаҫӗ), депутат Р. А. Джалилов (Таджик ССР-ӗ), СССР-ӑн Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарӗ М. И. Салтыков юлташ, депутат С. О. Притыцкий (Белорусси ССР-ӗ), депутат Ф. А. Растегаева (Удмурт АССР-ӗ), СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Аслӑ шкул ӗҫӗсен Комитечӗн Председателӗ С. В. Кафтанов юлташ.

* * *

Каҫхине 6 сехетре Союз Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ.

Ларӑва Союз Совечӗн Председателӗн Заместителӗ депутат Т. Д. Лысенко председатель пулса ертсе пынӑ.

Кун йӗркинче—ССР Союзӗн 1944-мӗш ҫулхи государство бюджечӗ тата 1940, 1941, 1942-мӗш ҫулсенчи государство бюджечӗсене мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси.

Прение ҫаксем тухса калаҫӑ: депутат Т. Кулатов (Киргиз ССР-ӗ), депутат В. П. Потемкин (РСФСР), депутат И. Ф. Зименков (Сталинград облаҫӗ), депутат К. Ф. Сахарова (Иваново облаҫӗ), СССР-ӑн Пирӗвӑр промышленность Халӑх Комиссарӗ И. Н. Акимов юлташ, депутат С. А. Вагапов (Пушкӑрт АССР-ӗ), депутат Н. И. Чмутов (Тула облаҫӗ), СССР-ӑн Строительство материалӗсен промышленность Халӑх Комиссарӗ Л. А. Соснин юлташ, депутат П. Ф. Тюляев (Краснодар крайӗ), депутат З. Т. Сердюк (Киев облаҫӗ), депутат И. П. Кипаренко (Ростов облаҫӗ).

Национальноҫсен Совечӗн ларӑвӗ

Январӗн 31-мӗшӗнче ирхине Национальноҫсен Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ. Председатель сӗтелӗ умӗнче—Национальноҫсен Совечӗн Председателӗ Н. М. Шверник тата Национальноҫсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗсем Ч. А. Аслановӑпа М. В. Кулагин. Ларӑва Национальноҫсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ Ч. А. Асланова ертсе пырать.

Сессин кун йӗркинчи пӗррӗмӗш пункчӗ тӑрӑх пренисем малалла пыраҫҫӗ. Тухса калакан депутатсем пурте ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗн, совет халӑхне нимӗҫ оккупанчӗсене ҫӗнтерме тата хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн халӑх хуҫалӑхӗпе культурине малалла аталантарса пыма май паракан бюджечӗн проектне пӗр кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр,—тет депутат М. И. Джаши, — Грузи ССР-ӗн халӑх хуҫалӑхӗ фронтпа ҫӗршыва вӑрҫӑ хатӗрӗсем, промышленность таварӗсем тата апат-ҫимӗҫ ытларах та ытларах парса тӑрать. 1944 ҫулта пурнӑҫа кӗртме палӑртнӑ бюджет Грузи ССР-ӗн халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарса пыма май парать.

М. Ибрагимов депутат Совет Азербайджанӗн культури чечекленсе пыни ҫинчен каласа парать.

Кун хыҫҫӑн И. С. Былинский депутат тухса калать.—Халӗ фашистла йыткӗтӗвӗсене Совет Белоруссийӗнчен массӑллӑн хӑваласа кӑларас ӗҫ пырать,—тет вӑл.—Республикӑн ирӗке кӑларнӑ районӗсене Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрлех пурнӑҫпа телейлӗх пырать, хуласемпе ялсене юсаса йӗркелеҫҫӗ.

Белорусси ССР-ӗн государство бюджечӗ ирӗке кӑларнӑ районсенчи халӑх хуҫалӑхне хӑвӑртрах юсаса йӗркелеме май парать.

Пулӑ промышленность Халӑх Комиссарне А. А. Ишков юлташа сӑмах параҫҫӗ. Ишков юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче пулӑ промышленноҫӗнчи работниксем хастарлӑн ӗҫлени ҫинчен, вӗсем Хӗрлӗ Ҫарпа паттӑр совет тылне пулӑ продукчӗсем тӑратас тӗлӗшпе канма пӗлмесӗр ӗҫлени ҫинчен фактсем илсе кӑтартать.

Узбек халӑхӗ вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлени ҫинчен, вӑл фронта пулӑшасшӑн хастарлӑн тӑрӑшни ҫинчен Т. Кары-Ниязов депутат каласа парать.

Н. А. Масленникова депутат СССР Верховный Совечӗ оборона валли 128,4 миллиард тенкӗ уйӑрни ҫинчен пӗлтернине совет ӗҫҫыннийӗсем пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илесси ҫинчен калать.

Р. Джалилов депутат Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсем совет халӑхне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарни ҫинчен калать. Таджикистанӑн промышленноҫӗпе ялхуҫалӑхӗ государствӑна продукци вӑрҫӑчченхинчен нумай ытларах параҫҫӗ.

ССР Союзӗн Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарӗ М. И. Салтыков хӑйӗн сӑмахӗнче вӑрман промышленноҫӗнчи работниксем ытларах та ытларах вӑй хурса ӗҫлени ҫинчен калакан цифрӑсене илсе кӑтартать.

С. О. Притыцкий депутат совет государстви халӑх хуҫалӑхне аталантарма тата социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисене ирттерме бюджет тӑрӑх паракан нумай укҫа-тенке перекетлӗн тыткалас тӗлӗшпе Сессие практикӑллӑ ыйтусем лартать.

Ф. А. Растегаева депутат (Удмурт АССР-ӗ) совет правительстви, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисене ирттерме ҫултан ҫул ытларах та ытларах укҫа-тенкӗ парса пыма май тупни ҫинчен калать. Ҫакӑнта партипе правительство ССР Союзӗнчи халӑхсен культурине ҫӗклессишӗн тӑрӑшни палӑрса тӑрать.

Совет интеллигенцийӗн ырӑне ҫинчен, вӑл фронтшӑн, ҫӗршывӑн оборона тӗрекне ҫирӗплетессишӗн вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлени ҫинчен ССР Союзӗн Совнаркомӗ ҫумӗнчи Аслӑ шкулсен ӗҫӗсен Комитечӗн Председателӗ С. В. Кафтанов юлташ каласа парать.

Ҫакӑнпа Национальноҫсен Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ хупӑнать. (ТАСС).

Союз Совечӗн ларӑвӗ

Январӗн 31-мӗшӗнче каҫхине Союз Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ. Председатель сӗтелӗ умӗнче—Союз Совечӗн Председателӗ А. А. Андреев депутат тата Союз Совечӗн Председателӗн Заместителӗсем — Т. Д. Лысенко тата У. Юсупов депутатсем. Ложӑсенче—СССР Верховный Совет Президиумӗн членӗсемпе правительство членӗсем.

ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси малалла пырать. Председатель—Союз Совечӗн Председателӗн Заместителӗ Т. Д. Лысенко—Т. Кулатов депутата сӑмах парать.

Кулатов юлташ Киргиз республики политикӑпа экономика тата культура тӗлӗшпе аталанса пынине кӑтартакан цифрӑсемпе фактсене илсе кӑтартать, вӗсем ленинла-сталинла наци политики ҫӗнтерни ҫинчен уҫӑмлӑн каласа параҫҫӗ.

Кун хыҫҫӑн В. П. Потемкин депутат тухса калать.

Потемкин юлташ ҫӗршывӑн ирӗке кӑларнӑ районӗсенче хуҫалӑха юсаса йӗркелес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тунине ҫутатса парать.

— Пӗр ҫулталӑк каярах пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар тӑшманӑн Сталинград районӗнчи ҫарӗсене пӗтерсе тӑкрӗ,—тет И. Ф. Зименков депутат.—Партипе правительство куллен тӑрӑшнине пула, пӗтӗм ҫӗршывӑри ӗҫҫыннисем—Мускаври, Ленинградри, Горькири, Саратоври, Куйбышеври, Свердловскри, Челябинскри ӗҫҫыннисем тӑванла пулӑшнине пула Атӑл ҫинчи юмахри пек хула — Сталинград — хӑвӑрттӑн ӳссе ҫитӗнет.

К. Ф. Сахарова депутат совет ҫамрӑкӗсен кӗрешӗвӗпе ӗҫӗ ҫинчен каласа парать.

ССР Союзӗн Пир-авӑр промышленность Халӑх Комиссарӗ И. Н. Акимов юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче пир-авӑр промышленноҫне аталантарса пырасси ҫинчен калать.

Совет Союзӗн Совнаркомӗ тӑратнӑ бюджет проектне пур халӑхсем те ырлӗҫ,—тет депутат С. А. Вагапов. Вӑл Башкирин халӑх хуҫалӑхӗ ӳссе пыни ҫинчен тӗплӗн каласа парать. Башкирин халӑх хуҫалӑхӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Совет Союзӗнчи промышленноҫлӑ паллӑ районсенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Н. И. Чмутов депутат гитлеровецсем Тула облаҫӗнче хуҫалӑхне вӑхӑтра тунӑ ирсӗр ӗҫсем ҫинчен каласа парать. Малтанлӑха шутланӑ тӑрӑх, нимӗҫ захватчикӗсем Тула облаҫне 5,5 миллиард тенкӗлӗх ытла сиен кӳнӗ. Халӗ ӗнтӗ Мускав ҫывӑхӗнчи бассейнри мӗнпур шахтӑсене, нумай шкулсене, ачасен сачӗсемпе яслисене пӗтӗмпех юсаса йӗркеленӗ. Правительство кӑҫал ҫав ӗҫсене тума нумай укҫа-тенкӗ парать.

ССР Союзӗн Строительство материалӗсен промышленность Халӑх Комиссарӗ Л. А. Соснин юлташ государство бюджечӗн капитальнӑй строительство ыйтӑвӗсене тивӗҫтермелли пайӗ ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑрать.

П. Ф. Тюляев депутат сӑмах илет. Вӑл Краснодар крайӗ нимӗҫсен оккупацийӗнчен хӑтарнӑ хыҫҫӑн мӗнле хӑвӑрттӑн аталанса пыни ҫинчен калать. Кӑҫалхи бюджет тӑрӑх пама палӑртнӑ укҫа-тенкӗ крайӑн хуҫалӑхне, культурине, наукине тата та хӑвӑрттӑн ҫӗклесе пыма май парать.

Гитлеровецсем Киев облаҫӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен З. Т. Сердюк депутат каласа парать. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар, Сталин юлташ ертсе пынипе, Украинӑн Днепр шывӗн сулахай енчи ҫӗрне пӗтӗмпех нимӗҫ оккупанчӗсенчен тасатса ҫитерчӗ тата халӗ вӑл оккупантсене Хӗвеланӑҫнелле хӑвалать. Украинӑри нумай миллионлӑ ӗҫҫыннисем нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене Украина ҫӗршывӗ ҫинчен хӑваласа кӑларма пулӑшнӑшӑн совет правительствине, Ленин—Сталин партине, аслӑ вырӑс халӑхне тата Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсене тав тӑваҫҫӗ. Украина халӑхӗ, пӗтӗм ҫӗршыври халӑхсем пекех, Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗн хӑватне ҫирӗплетме ытларах укҫа-тенкӗ расходланине тулли кӑмӑлпа савӑнса кӗтсе илет.

И. П. Кипаренко депутат бюджетӑн чылай укҫи-тенкине хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыв оборонине тӗреклетес, нимӗҫ захватчикӗсене аркатса тӑкас ӗҫе яни Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен шухӑш-кӑмӑлӗсене кӑтартса пани ҫинчен калать.

Сесси ҫирӗплетме тӑратнӑ ҫӗнӗ бюджет оккупантсен сӑтӑрла ӗҫӗсен юлашкийӗсене кӗске вӑхӑтрах пӗтерме пулӑшать. Партипе правительство тӑрӑшнине Дон казакӗсем фронта пулӑшассине вӑйлатнипе, ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫар валли ялхуҫалӑх продукчӗсем тӑвассине ӳстернипе ответлӗҫ.

Ҫакӑнпа Союз Совечӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ хупӑнать. (ТАСС).

В. М. Молотов юлташ Эфиопи посланникне Л. Таэзас господина йышӑнни

Январӗн 31-мӗшӗнче Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Эфиопин Совет Союзӗнчи чрезвычайнӑй посланникне тата полномочнӑй министрне Л. Таэзас господина йышӑннӑ. Ку йышӑну Л. Таэзас господин хӑйӗн верительнӑй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне парас тӗлӗшпе пулса иртнӗ.

Нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкни паян çулталăк тултарчĕ

«СТАЛИНГРАД ПАТЕНЧЕ ПЫНА ÇАПАÇУ НИМЕÇСЕН 300 ПИН СЫНЛА САРНЕ ÇАВАРСА ИЛНИПЕ АНА АРКАТСА ТАКНИПЕ ТАТА ÇАВАРСА ИЛНЕ ÇАРСЕН ВИÇÇЕМЕШ ПАЙНЕ ТЫТКА-НА ИЛНИПЕ ВЕÇЛЕНЧЕ» (С Т А Л И Н).

Çак ўкерчĕксем çинче Сталинградри аслă çапăçăвăн юлашки тапхăрĕсене кăтартнă: СУЛАХАЙРАН СЫЛТАМАЛЛА: 1. Сталинград районĕнче тыткăна лекнĕ гитлеровецсем хула урамĕпе пыраççĕ. 2. Нимĕç çарĕсен Сталинградри группировкин штабне Паулюс генерал-фельдмаршалпа пĕрле тыткăна илнĕ çĕре хутшăннă танк экипажĕ. 3. Сталинградра, гитлерла захватчиксенчен ирĕке кăларнă вăтасĕрти пайĕнче, совет флагне çĕклеççĕ.

Е. КОПЫТАПА А. ЗЕНИН фото ўкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем, ВОЛОСОВО хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла çапăçса тытса илнĕ, вăл шутра ДУБНЯ, ПОСЕЛОК, ПЕЙПИЯ, МАЛОЕ СТРЕМЛЕНИЕ, ЗАОЗЕРЬЕ, БАССАКАРА, БОЛЬШАЯ РАССИЯ, МАЛАЯ РАССИЯ, МОНАСТЫРКИ, УНДОВО, МАТИЯ, МУККОВА, КРИККОВО, КИКЕРИЦЫ, КЕРСТОВО, КИЛЛИ, МАЛЛИ, ЗАПОЛЬЕ, АЛЕКСЕЕВКА, ТИКОПИСЬ, КУКОВО, БОЛЬШОЙ ЛУЦК, МАЛЫЙ ЛУЦК, БОЛЬШОЕ КЛЕННО, НЕДОБЛИЦЫ, ВЫПОЛЗОВО, ИВАНОВСКОЕ, ЮРКИ ятлă ялсене тата КИХТОЛКА, КЕРСТОВО, КЛЕННО ятлă чугун çул станцийĕсене. Пирĕн çарсем КИНГИСЕПП хули патне таччăнах пырса тухнă та, халĕ çапăçусем хула тулашĕнче пыраççĕ.

СИВЕРСКИРЕН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, ДОМАШЕВО, МАКСИМОВКА, СЛЕПИНО, МЫШКИНО, РЕДКИНО, ГАНЬКОВО, ПЕЛЕШИ, ЯЗВИЩЕ, ГОСТЯТИНО, БОЛЬШОЙ САБСК, ЗАГОРЬЕ, ЛИКОВСКОЕ, ЛИПА, МАЗАНА ГОРКА, ВАСИНА НИВА, РОЖДЕСТВЕНО, БОЛЬШЕВО, ЗАЙЦЕВО, ТОЗОРЕВО, МАЛАЯ ДИВЕНКА, ДИВЕНСКИЙ, ОСТРОВ, ЗАОЗОРЬЕ ятлă ялсене тата ДИВЕНСКОЕ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. РОЖДЕСТВЕННО тата ОСТРОВ ялĕсенче унччен çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пирĕн çарсем пĕтерсе тăкнă. Чылай вырăнсенче пирĕн çарсем ЛУГА шывĕ урлă каçнă.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманăн вăрман çулĕсем çинчи инженерла чăрмавĕсене çĕнтере-çĕнтере, çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 40 ял ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче МОШКОВЫ ПОЛЯНЫ, РУЧКА, КОРОСТЫНИ, ТРЕНЬКОВО, САВИНОВЫ ПОЛЯНЫ, МЯЧИНО, ПОКРОВКА, СМЫЧ, РАДОВЕЖИ, ЛЮБИНО ПОЛЕ, МАЛЫЙ ВОЛОЧЕК, ЗАРЕЧЬЕ, ВЯЖИЩИ, ЛЮДЯТИНО, КАЗОВИЦЫ, ТУРЬСКАЯ ГОРКА.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тănине çĕнтерсе пырса, темиçе ял тытса илнĕ.

Январĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 98 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 44 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Волосово хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ, халĕ тăшманпа Кингисепп хули тулашĕнче çапăçаççĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман тупăсем, йывăр минометсем, çавăн пекех тата çар пурлăхĕн складĕсене пăраха-пăраха хăварать. Волосово хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене вăрмана тата шурлăхсене хăваласа кĕртнĕ те тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă ушкăнĕсене пĕтереççĕ. Пĕр районра çăмăллăн куçса çўрекен совет чаçĕсем нимĕçсен пĕрлештернĕ ушкăнне аркатса тăкнă. Тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сиверский поселокран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, малалла куçса пынă, чылай вырăнсенче Луга шывĕ урлă каçса кайнă. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр сухатусем кўнĕ. Пирĕн çарсем ĕнер Сиверский поселокĕпе чугун çул станцийĕнче пĕтерсе тăкнă нимĕç гарнизонĕнче пĕр танковăй полк, пĕр моторизованнăй полк, икĕ пехотнăй полк, строительнăй батальон тата ытти подразделенисем те пулнă. Паян пирĕн çарсем Рождественно тата Остров ялĕсенче çавăрса илнĕ тăшман гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Çав ялсен урамĕсенче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Любань хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Вăрман çулĕсемпе каялла чакакан тăшман хăйĕн техникипе хĕçпăшалне пăраха-пăраха хăварать. Çăмăллăн куçса çўрекен совет отрячĕсем, çавăрса илмелли маневрсем туса, нимĕçсен каялла чакмалли çулĕсене пўле-пўле лартаççĕ те тăшмана пайăн-пайăн пĕтереççĕ е тыткăна илеççĕ. Пĕр чаçри подразделенисем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, 17 тупă, 66 пулемет тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 80 лав тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем нимĕç автоматчикĕсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Луга шывĕ урлă каçнă та унăн сылтăм енче чылай ялсем йышăнса илнĕ. Тăшман хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма хăтланса, темиçе контратака пуçласа янă, анчах та нимĕçсене пысăк çухатусем кўрсе каялла сирсе ывăтнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем Вольная Горка ятлă яла йышăнса илнĕ те 16 тупă тата çар пурлăхĕн 3 складне тытса илнĕ. Пĕр танковăй подразделени, нимĕçсен тылĕнче кĕрешсе, тăшманăн артиллери полкне аркатса тăкнă, юсавлă 20 тупă тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем январĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитичченех чугун çул çинчи 2.000 рельса ытла, 18 кĕпере тата тăшманăн бронепоездне сирпĕнтерсе янă. Чугун çулсене сыхлакан нимĕç хуралçисемпе çапăçса, партизансем 180 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Январĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Ленинград облаçĕнчи партизансен икĕ отрячĕ чугун çул станцине тапăннă та нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă, чугун çула ишсе антарнă тата тăшманăн 2 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Венгрин телеграф агентстви Венгри çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсем майлă вăрçмаççĕ тесе çине тăрса пĕлтерет. Çав агентство, тарăхса кайнă пек пулса, çапла калать: Венгри çарĕсем Германи енче вăрçăççĕ тени тĕрĕс хыпар мар вăл, çавăн пек пĕлтерекен хыпарсене «Венгрие вараласшăн» кăна сараççĕ, тет.

Будапешт хулинчи гитлеровецсем, ухмахсем пек пулса, мыскара выляççĕ. Пĕтĕм тĕнче çакна пĕлсе тăрать: Венгрире пуç пулса тăракан ушкăн хăй ирĕкĕпе гитлерла Германипе союз турĕ. Венгрин премьер-министрĕ Каллаи 1942 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче пурте илтмеллех çапла каланă: «Венгри халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăй-халне çак вăрçа парĕ. Венгрия яланах Германипе тата Италипе пĕрле пырĕ, яланах хăйĕн икĕ аслă союзникĕ енче тăрĕ, вăрçă пĕтнĕ хыççăн Европăна çĕнĕ никĕс çинче çĕнетнĕ чухне вĕсемпе пĕрле пулĕ», тенĕ.

Çакна Венгрин премьер-министрĕ хитре сăмах калас тесе каламан. Гитлерăн Будапештри тарçисем хăйсене хăйсем вăрă-хурахла фашистсен шайккипе çăмăл тупăш тупма шутласа сыхăнтарнă. Вĕсем Венгри çарĕсене Совет Союзĕпе Германи фронтне янă, Венгри салтакĕсем темиçе вунă пин çын Дон çинчи çĕнтерсенче пĕр чапсăр пĕтрĕç. Çавăн чухне Будапешт хулинче Венгрин ют çĕршывсене тытса илес планĕсене никам та пытарса тăман, пачах урăхла—ун чухне вĕсем пурте хăйсем Германи енче пулса Совет Союзĕпе вăрçнипе мухтанса калаçнă. Халĕ ĕнтĕ, вăрçă телейĕ Германи аллинчен вĕçерĕнсе тепĕр енне куçнă май тата Германия тĕнсĕр шăтăк умне куçса пынине кура, Гитлерăн Венгрири тарçисем ăçта «йывăç тĕмисем» пур-ши тесе пăхаççĕ. 1943 çулхи декабрь уйăхĕнче Венгрин премьер-министрĕ çав Каллаиех, ытлах та ăнланмалла мар калаçса çапла сўпĕлтетнĕ: «Венгрин ют çĕршывсене тытса илесшĕн вăрçман, вăл ку вăрçăра çăмăл е йывăр тупăш курасшăн пулман... Ку пушара чĕртсе яракансем эпир мар, çак пушар вут-сулăмĕ пирĕн çĕршыва ярса илнине никам та эпир тунă преступлени тесе калама пултараймасть», тенĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, эпĕ те эпĕ мар, лаша та манăн мар, эпĕ хам та извозчик мар. Гитлер умĕнче чĕркуçланса çўресе йăпăлтатса, Венгри влаçĕсем хăйсен çĕршывне чысран намăса кăларчĕç, халĕ вара тивĕçлипе тавăрса памалли вăхăт çывхарса килнĕ май, намăса çухатнă питсĕрсем Венгри дивизийĕсем халĕ те Германи енче тăрса Совет Союзне хирĕç вăрçаççĕ тенĕ хыпарсем «Венгрие ахалех вараласççĕ» тесе сўпĕлтетеççĕ.

Ку мыскара никамах та улталама пултараймĕ. Агентство хирĕçле каланисем те тата хăшпĕр министрсем «мирлĕ» сăмахсем туха-туха калаççĕ пулин те, Венгрия ĕлĕкхи пекех нимĕçсем енче тăрса активлăн вăрçать. Питĕ тĕрĕссĕн çакна палăртнă: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Венгрин пĕр кавалери тата 11 пехотнăй дивизийĕ çапăçаççĕ. Çав дивизисен хăшпĕр пайĕсем нимĕç çарĕн тылĕсенче хуралта тăраççĕ, советсен мирлĕ халăхне тискеррĕн асаплантарса тыткалаççĕ. Венгри çарĕсен тепĕр пайĕ, вăл шутра 12-мĕш, 18-мĕш, 19-мĕш çăмăл пехотнăй тата ытти дивизийĕсем те, фронтăн малти линийĕнче тăрса çапăçаççĕ. Январь уйăхĕнче çав дивизисен совет вĕнчи салтаксемпе унтер-офицерсен пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ.

Сăмахпа мар, ĕçре çакăн пек курăнса тăрать ĕнтĕ Венгри влаçĕсен политики. Вĕсем малтанхи пекех Гитлера пулăшса тăраççĕ, анчах та Венгрия мирлĕ государство тесе тăрă шыва суя сăмахсем сарса пăтратма хăтланаççĕ.

Сталинградри аслă çапăçу

Нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнăранпа çулталăк тултарнă тĕле

1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче историри чи аслă çапăçусенчен пĕри—Сталинградшăн пынă çапăçу вĕçленнĕ.

Сталинграда тытса илессине нимĕç командованийĕ питĕ пысăк вырăна хунă. Германин генеральнăй штабĕн планĕ тăрăх, нимĕçсен фашистла çарĕсем Сталинграда йышăнса, Мускава хĕвелтухăçĕнчен хупăрласа илмелле, çĕршывăн вăтаçĕр пайне Атăлпа Урал тылĕнчен татса Совет Союзĕн столицине пырса çапмалла пулнă. Çапла вара вĕсем, Хĕрлĕ Çара аркатса тăкса, вăрçа хăйсемшĕн ăнăçлăн вĕçлеме шутланă. Пирĕн вăйсене тĕп направленирен пăрса ярас шутпа, нимĕçсем, çав вăхăтрах, Баку хулине тата нефть пуянлăхĕсене тытса илес тесе, кăнтăр еннелле те наступлени пуçласа янă.

Сталинград патĕнчи кĕрешўре çапла вара пирĕн Тăван çĕршывăн кунçулĕ пирки ĕç татăлнă. Çав хула çине нимĕçсем чĕр вăйпа техника çав тери нумай хăваласа килнĕ, çапăçăва суйласа илнĕ 36 кадровăй дивизи кĕртсе янă. Çухатусене пăхмасăрах, вĕсем, кирек епле пулсан та, çĕнтересшĕн пулнă. Сталинградшăн пынă çапăçу çав тери анлăн сарăлса кайнă, ун пек çапăçу вăрçăсен историйĕнче нихăçан та пулман. Çав çапăçăва пирĕн çарсем тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкнипе вĕçлерĕç.

* * *

Атăл хĕрринчи çапăçусем пуличчен малтан нимĕçсем Воронеж еннелле наступлени пуçласа пăхрĕç, унтан вĕсем кĕске çулпа тўррĕмĕнех Мускав хыçне тухма шутларĕç. Кунта ĕç ăнман пирки, тăшман çарĕсем Сталинград патнелле куçма тытăнчĕç, июль уйăхĕн вĕçĕнче, пысăк çухатусем тўссе, Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хĕсме пултарчĕç. Донпа Атăл хушшинчи вырăнта çав тери хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Вăл çапăçăва пĕр миллион çын ытла хутшăннă. Вăл çапăçăвăн уйрăм тапхăрĕсенче пĕр вăхăтрах икĕ пин ытла танк, икĕ пине яхăн самолет тата çирĕм пин ытла оруди пулнă.

Çапăçăва çĕнĕрен çĕнĕ çарсем хутшăнтарса, нимĕçсем Сталинградăн уйрăм урамĕсене тытса илнĕ, трактор завочĕн районне пырса кĕнĕ, пирĕн чаçсене çурма ункă пек çавăрса илнĕ, вĕсене Атăл хĕрринелле хĕссе пынă.

Пирĕн çарсем çав тери çирĕп тăнипе гитлерла йытăкĕтĕвĕсен вăйĕсем аркана-аркана кайрĕç. Сталинграда хўтĕлекенсем, Тăван çĕршывăн, çулпуçăн „пĕр утăм та чакмалла мар!" тенĕ приказне пурнăçласа пырса, Атăл çинчи ансăр çĕр çинче паттăррăн çапăçнă, вĕсем кашни урама, кашни çурта хăюллăн хўтĕленĕ. Çав тери вирлĕн хирĕç тăрса çапăçса, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшман çарĕсене юн ăшне путарса халран янă. Сталинградри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшса тăнă. Боецсемпе пĕрле вĕсем тăван хулашăн çапăçнă, боеприпассем илсе пырса тăнă, аманнисене пулăшнă. Октябрь уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле нимĕçсен наступленине чарса лартнă.

Çав вăхăтра, Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ Сталинград патне тухнă нимĕç çарĕсене аркатса тăкас тĕлĕшпе пысăк операци хатĕрленĕ. 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн чаçсем татăклă наступлени пуçласа ячĕç. Вăтаçĕр Дон районĕнчен тата Сталинградран кăнтăртарах выртакан кўлĕсен районĕнчен вирлĕн пырса çапса, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нимĕçсемпе румынсен чаçĕсене çĕмĕрсе тăкрĕç те, ноябрĕн 23-мĕшĕнче тăшман группировкине пĕтĕмпех хупăрласа илчĕç. Нимĕçсен икĕ армийĕ—6-мĕшпе 4-мĕш танковăй арми—суйласа илнĕ 22 дивизи, мĕн пурĕ 330 пин çын нумай çар техникипе пĕрле пирĕн çарсен ункине кĕрсе ўкрĕ.

Нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕсене хупăрласа илнĕ çĕртен хăтарас тесе, тем тĕрлĕ те хăтланса пăхни ахалех путланса ларчĕ. Декабрь уйăхĕнче совет çарĕсен чаçĕсем итальянецсен 8-мĕш, румынсен 3-мĕш армийĕсене, çавăн пекех Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсене пулăшма васкакан тăшманăн Котельниковăри тата Тормосинскри группировкисене те аркатса тăкрĕç. Юн ытлашши тăкас мар тесе, совет командованийĕ тăшман çарĕсен командованине тата пĕтĕм офицерĕсемпе салтакĕсене тĕлсĕр хирĕç кĕрешме пăрахма сĕнсе ультиматум тăратнă. Анчах гитлерла генералсем ультиматума йышăнман.

1943 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар генеральнăй наступлени пуçласа ячĕ, çакă вăл вара тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасси тата тыткăна илесси патне илсе пычĕ. Совет çарĕсен тимĕр кăшăлĕнчен пĕр гитлеровец та тухса тарма пултараймарĕ. Генерал-фельдмаршал Паулюс армине пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе пыракан çапăçусем 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче совет çарĕсем тĕппипех çĕнтернипе вĕçленчĕç. Германипе Румынин 24 генеральне, 2.500 яхăн офицерне, 91.000 ытларах салтакне тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Сталинград патĕнчи çапăçу çак вăрçа пирĕн майлă улăштарнă тапхăр пулса тăчĕ. Атăл хĕрринче тунă историллĕ çĕнтерў хыççăн Хĕрлĕ Çар анлă фронтра наступлени тума тытăнчĕ, оккупантсенчен Çурçĕр Кавказпа Кубане тытса илчĕ, Вăтаçĕр Донпа Воронеж районĕнче нимĕçсене йывăр сиен кўчĕ, центральнăй фронтра (Ржев—Гжатск—Вязьма) тата Демянск районĕсенче тăшман плацдармĕсене пĕтерсе тăкрĕ, Ленинград блокадине татрĕ. Сталинград хирĕсенче „нимĕçсен фашисла çарне никам çĕнтерейместь" текен халлап яланлăхах пăрахăçа тухрĕ. Сталинград хыççăн тăшмана хамăр çĕр çинчен массăллăн хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ.

Иртнĕ çул хушшинче совет çарĕсем, хамăр Тăван çĕршывăн аслă Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, аслă çула утса тухрĕç. Хĕрлĕ Çар халĕ тăшмана Днепр леш енчи Украинăра тата Белоруссире çĕмĕрет. Вăл Ленинграда тăшман блокадинчен тата артиллерирен варварла персе тăнинчен хăтарчĕ. Тăшман хирĕç тăнине сире-сире пăрахса, ăна умлăн-хыçлăнах хăватлăн пыра-пыра çапса, совет воинĕсем малалла куçаççĕ. Нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас сехет çывхарать. Октябрьти социализмлă аслă революци XXVI çул тултарнă ятпа тунă докладра Сталин юлташ, вăрçă ĕçĕсем тĕпренех пирĕн çĕршыв майлă улшăннине палăртса, çапла каларĕ: вăрçă тĕлĕшĕнчен пăхсан, нимĕç çарĕсем пирĕн фронтра 1943 çул вĕçленнĕ тĕле поражени тўсни икĕ питех те пысăк событирен: Сталинград патĕнчи çапăçупа Курск патĕнчи çапăçуран килнĕ.

„Сталинград уйхирĕсенче пулса иртнĕ историре халиччен нихăçан та курман çапăçусен пысăкăшне ăнланса илес тесен,—тенĕ Сталин юлташ,—çакна пĕлмелле: Сталинград патĕнчи çапăçу вĕçленнĕ хыççăн нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 147.200 виллине тата совет салтакĕсемпе офицерĕсен 46.700 виллине пуçтарса илсе пытарнă. Сталинград нимĕçсен фашистла çарĕн кунçулĕ пĕтсе лarasси çывхарни пулса тăчĕ. Çакă паллă, Сталинград патĕнчи çапăçусем хыççăн нимĕçсем урăх хал илеймерĕç".

Пирĕн çарсен Сталинград патĕнчи ĕçĕсем, Сталин юлташ ертсе пынипе пурнăçланăскерсем, шухăшĕпе ăна пурнăçлани тĕлĕшпе пăхсан, çар наукине пысăк парне кўнине пĕлтереççĕ. Ку вăл хальхи наступленилле операцин классикăллă тĕслĕхĕ, çар наукин чи пысăк çитĕнĕвĕ пулса тăрать. Нимĕç группировкине çавăрса илсе аркатса тăкни—сталинла стратегин чапĕ пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çарăн генералĕсем, офицерĕсем тата боецĕсем Сталинградшăн пынă çапăçусенче вăрçăри пысăк ăсталăха, нихăçан курман тўсĕмлĕхе паттăрла кăтартрĕç.

Атăл çинчи совет тĕреклĕхĕшĕн пынă çапăçу ăнăçлăн вĕçленни пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе савăнтарчĕ. Сталинградри çĕнтерў тăшман лагерьне шиклентерсе ўкерчĕ. Хĕрлĕ Çара пĕтĕм тĕнче кăмăлласси ўсрĕ, совет халăхĕн паттăрлăхĕ малта пыракан пĕтĕм этемлĕхе тĕлĕнтерчĕ. Сталин юлташ ячĕпе янă саламра США президенчĕ Рузвельт çапла çырнă: „162 кун хулашăн хастарлăн çапăçни, Сирĕн ятăра ĕмĕрлĕхе чапа кăларнă çав çапăçу тата вăл çапăçăвăн паян пур американецсем те уявласа хисеплекен татăклă результачĕ—нацизмпа унăн хўрешкисене хирĕç пĕрлешнĕ халăхсем туса пыракан вăрçăн историйĕнче чаплă тапхăрсенчен пĕри пулса тăрĕ. Сирĕн фронтри çарсен командирĕсемпе боецĕсем тата заводсемпе уйкирсенче ĕçлесе, вĕсене пулăшса тăнă арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен çĕршывĕн хĕçпăшалне чапа кăларас тесе çеç мар пĕрлешнĕ, вĕсем хăйсен примерĕпе мĕнпур пĕрлешнĕ нацисене пирĕн пĕрлехи тăшмана татăклă поражени кўмешкĕн тата ăна пĕр сăмахсăрах парăнтармашкăн çĕнĕрен пĕтĕм вăя хурса кĕрешме хавхалантарас тесе те пĕрлешнĕ".

Хĕрлĕ Çар халĕ тăшмана хĕвеланăçнелле инçерен инçерех хăваласа пырать, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкса, совет çĕрне гитлерла захватчиксенчен тасатать. Тылра вирлĕн ĕçлесе, ĕçхалăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарне пулăшать, çĕнтерў тума ăна мĕн кирлине пурне те парса тăрать.

Хăйсем каялла чакса пынине нимĕçсем фронт линине „кĕскетсе ансăрлататпăр" тесе ăнлантарса пама хăтланчĕç. Вĕсем хăйсен суялăхĕнче лакса ларни халĕ пĕтĕм тĕнчешĕн паллă. „Пирĕн çар тата пирĕн халăх çакна шанса тăрать,—тенĕ Щербаков юлташ Ленин вилни XX çул тултарнă майпа тунă хăйĕн докладĕнче,—гитлеровецсем çав тери чакса пынипе нимĕç çарĕшĕн чи кĕске фронт линийĕ Берлин ларакан Шпрее шывĕ тăрăх пулĕ".

Вăрçă ĕçне тĕпренех пирĕн майлă улăштарнă Сталинградшăн пынă аслă çапăçу халăх асăмĕнче ĕмĕрлĕхех юлĕ. Сталинград вăл—Тăван çĕршыв чыслăхĕшĕн, тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçри паттăрлăхпа çирĕплĕхе палăртакан, фашизма çĕнтерессине палăртакан символ пулса тăрать.

Полковник Ф. ВОРОБЬЕВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Тĕштырăсен сортне сăнакан госинспекцие секретарь-машинистка кирлĕ.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, Наркомзем, ком. № 9.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00024 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.490 экз.